# ИВАН ВАЗОВ

*Болгари Халăх Республики*

## ТĂВАН СĂМАХ

И. Д. Шишманов доктора

Тăван сăмах! Нимрен чечен
Паха çак тĕнчере эс маншăн.
Ăста поэтăн аллинче
Эс хĕç те, арфа та пулатăн.

Чĕлхемĕр, кам сана савмасть?
Эс — пирĕн чун хыптарнă çулăм.
Эс - хурçă та хĕвел, алмаз,
Таса та пиçĕ, çыпăçуллă.

Тăван çĕршыв чĕлхи! Санра -
Мăнаçлăх, тӳсĕм, аслă ирĕк.
Юратура та вăрçăра —
Эс пĕр танах илемлĕ, çирĕп.

Мана эс ӳсӗртрӗн йăлтах!
Хӗрсем юрлана юрăра та,
Сăвăсенче те — яланах
Сан тутлă сӗткенӳ упрантăр!